26-мĕш çул тухать. Хакĕ 20 пус.

1943
ОКТЯБРЬ
27
ЮНКУН
214(6457) №

Чăваш Коммуни

Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

ВКП(б) ОБКОМĔПЕ ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧĔН, ЧАССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕЧĔН ТАТА ШУПАШКАР ХУЛА СОВЕЧĔН ХАÇАЧĔ

Ĕççынни депутачĕсен райсовет исполкомĕсем тата ВКП(б) райкомĕсем тăратнă тăрăх, уборка вăхăтĕнче тухăçлă тата лайăх ĕçленĕшĕн, патшалăха тырă парса татнăшăн ялхуçалăхĕнче малта пыракансен республикăри Хисеп хăми çине çак колхозсене кĕртнĕ:

46. Канаш районĕнчи **Доронин ячĕпе тăракан колхоз** (колхоз председателĕ **Кузьмин** юлташ, пуçламĕш парторганизаци секретарĕ **Филиппов** юлташ). Ку колхоз тырра 19 ĕç кунĕнче пухса кĕртнĕ. Авăн çапса пĕтернĕ, патшалăха тырă парса татнă тата 1944-мĕш çулшăн аванс шучĕпе 165 центнер тырă панă. Кондратьев юлташăн уйхир бригади уйрăмах лайăх ĕçленĕ, вăл ялхуçалăх ĕçĕсене срокчен туса пĕтернĕ, гектартан вăтамран 14-шар центнер тĕштырă илнĕ.

47. Канаш районĕнчи **«Чуваш. ЦИК» ячĕпе тăракан колхоз** (колхоз председателĕ **Федотов** юлташ, комсомолăн пуçламĕш организацийĕн секретарĕ **Павлов** юлташ). Çак колхоз авăн çапса пĕтернĕ, патшалăха тырă парса татнă тата 1944-мĕш çулшăн аванс шучĕпе 102 центнер тĕштырă панă.

48. Канаш районĕнчи **«Идея Ленина» колхоз** (колхоз председателĕ **Ярандайкин** юлташ, комсомолăн пуçламĕш организацийĕн секретарĕ **Дубровин юлташ**). Колхоз октябрĕн 14-мĕшĕ тĕлне авăн çапса пĕтернĕ, патшалăха тырă парса татнă тата 1944-мĕш çулшăн аванс шучĕпе 50 центнер тĕштырă панă.

49. Канаш районĕнчи **Крупская ячĕпе тăракан колхоз** (колхоз председателĕ **Яковлев юлташ**, кандидат группин парторгĕ **Сергеев** юлташ). Ку колхоз авăн çапса пĕтернĕ, патшалăха тырă парса татнă тата 1944-мĕш çулшăн аванс шучĕпе 237 центнер тĕштырă панă.

50. Канаш районĕнчи **«Канаш» колхоз** (колхоз председателĕ **Мартынов** юлташ, комсомолăн пуçламĕш организацийĕн секретарĕ **Гаврилов** юлташ). Колхоз октябрĕн 17-мĕшĕ тĕлне авăн çапса пĕтернĕ, патшалăха тырă парса татнă тата 1944-мĕш çулшăн аванс шучĕпе 142 центнер тĕштырă панă.

Вăрмар районĕ государствăна тырă парса татрĕ

ВАРМАР. (Телефонпа). Октябрĕн 24-мĕшĕнче Вăрмар районĕнчи колхозсем государствăна тырă памалли плана пĕтĕмпех тултарса çитерчĕç. Халĕ государствăна 1944-мĕш çулшăн аванс шучĕпе тырă параççĕ.

ВКП(б) райкомĕн секретарĕ **СМИРНОВ.**
Райсовет исполкомĕн председателĕ **БИКТИМИРОВ.**

Вăрнар районĕ кĕрхи çĕртме тумалли плана тултарчĕ

Вăрнар районĕнчи колхозсем октябрĕн 25-мĕшĕнче кĕрхи çĕртме тумалли плана пурнăçларĕç. Вăхăтра тата лайăх сухаласа, район пурĕ 7.500 гектар çинче кĕрхи çĕртме туса хăварчĕ. Çапла, ялхуçалăх ĕçĕсене вĕçлемелли фронтовой уйăхлăха пирĕн районри колхозсем государствăна тырă парса татнипе, авăн çапса тата кĕрхи çĕртме туса пĕтернипе вĕçлерĕç. Кĕрхи çĕртмене халĕ плакран ирттерсе сухалаççĕ.

Кĕрхи çĕртмере Кольцовкăри Сталин ячĕпе, Сунарти Каганович ячĕпе тăракан колхозсем, Уравăшри «1-ое Мая», Хураçырмари «Ландыш» тата ытти колхозсем те лайăх ĕçлерĕç. Асăннă колхозсем кĕрхи çĕртме тумалли çулталăкри плана 120 процент тултарчĕç.

Халĕ пирĕн районри колхозсем тислĕк кăларма тытăнчĕç. Кăçал уйхире иртнĕ çулхинчен 4—5 хут ытларах тислĕк кăларатпăр.

С. КОРОТКОВ
ВКП(б) Вăрнар райкомĕн секретарĕ.

Республикăри ĕççыннисем Хĕрлĕ Çар воинĕсем валли Октябрь уявĕ ячĕпе 17 вагон кучченеç ăсатрĕç

Орденлă Чăваш республикинчи ĕççыннисем паттăр Хĕрлĕ Çар рядовойĕсемпе офицерĕсем валли уяв кучченеçĕсем пухас ĕçе пысăк хаваслăхпа туса ирттерчĕç. Вăл кучченеçсене 17 вагон çине тиесе ăсатнă. Пурĕ 10 тонна та 745 килограмм какай, 2 тонна та 279 килограмм çу, 2 тонна та 452 килограмм пыл, 37 тонна та 732 килограмм тулă çăнăхĕ, 59.788 çăмарта, 2 тонна та 150 килограмм премĕк, 3 тонна та 31 килограмм колбаса, 2.650 литр эрех, 2 тонна та 314 килограмм табак, 17 тонна та 74 килограмм пахча-çимĕç, 29 тонна та 559 килограмм çĕрулми, пĕр тонна та 388 килограмм кăмпа тата 7.021 уйрăм посылка яса панă.

Хĕрлĕ Çар воинĕсем валли уяв кучченеçĕсем пухас ĕçе уйрăмах Шупашкар хулинчи тата Шăмăршăри районĕсенчи ĕççыннисем пысăк лайăх ирттерчĕç. Канашпа Улатăр хулисенчи ĕççыннисем те фронтовиксем валли пуян та лайăх кучченеçсем ячĕç.

Хĕрлĕ Çарăн генералĕсен тата офицерсен, сержантсен, рядовойсен составне Совет Союз Геройĕн званине пани

Киевран кăнтăртарахра Днепр шывĕ урлă ăнăçлăн каçнăшăн, Днепр шывĕн хĕвеланăç енче вăйлăн çирĕпленсе ларнăшăн тата çав ĕçсенче кастарлăхпа паттăрлăх кăтартнăшăн, СССР Верховный Совет Президиумĕн октябрĕн 25-мĕшĕнчи Указĕ тăрăх, Хĕрлĕ Çарăн генералĕсене, офицерĕсене, сержанчĕсене тата рядовой боецĕсене, пурĕ 42 çынна, Ленин орденĕпе «Золотая Звезда» медаль парса, Совет Союз Геройĕн званине панă. (ТАСС).

Вырăс мар халăхсен шкулĕсен ĕçĕсем тĕлĕшпе пухнă канашлу

РСФСР Наркомпросĕнче автономиллĕ республикăсенчи, крайсенчи тата облаçсенчи вырăс мар халăхсен шкулĕсен ĕçĕсем тĕлĕшпе пухнă канашлу хăйĕн ĕçне пĕтернĕ. Канашлура Чăваш, Тутар, Пушкăрт, Дагестан, Кабардин-Балкар, Çурçĕр Осетин тата ытти республикăсен çутĕç халăх комиссарĕсем, чĕлхе ăстисем тата педагогсем пулнă. РСФСР Наркомпрос коллегийĕн членĕ Парфенова юлташ доклад туса панă.

РСФСР-ти вырăс мар халăхсен шкулĕсенче хăйсен чĕлхине 43 халăхăн 3 миллион ачине яхăн вĕренет, çав шутра юлашки вунă çул хушшинче кăна çырулăх туяннă чукчасем, мансисем, нанайсем, эвенксем, хантсем, эскимоссем вĕренеççĕ. Вырăс мар халăхсен пуçламĕш тата вăтам шкулĕсем йышлăланса пынипе пĕрлех çав халăхсенчен учительсем хатĕрлекен аслă тата вăтам педагогика шкулĕсен хисепĕ те ӳссе пынă.

Докладчик çакна палăртса панă: РСФСР-ти халăхсен культури ӳссе пынă пирки халь автономиллĕ республикăсен çутĕç органĕсем умне вырăс мар халăхсен шкулĕсенче вĕрентес ĕçе тата ытларах лайăхлатас задача тухса тăрать. Çак тĕлĕшпе ку таранччен пуçламĕш 4 класра кăна тăван чĕлхепе вĕрентнĕ шкулсен 5-мĕш, 6-мĕш тата 7-мĕш класĕсенче те тăван чĕлхепе вĕрентме тытăнни пысăк ĕç пулса тăрать. Кашни халăхăн тăван чĕлхепе тухакан учебникĕсене хальхинчен нумай ытларах кăлармалла.

Пренисенче Чăваш, Тутар, Пушкăрт, Дагестан тата ытти автономиллĕ республикăсен çутĕç халăх комиссарĕсем сăмах тухса каланă.

(ТАСС).

Укçапа япаласен виççĕмĕш лотерея билечĕсене илсе, тăшмана хăвăртрах çĕмĕрсе тăкма Хĕрлĕ Çара пулăшар!

Флегентов тата Алексеев юлташсем 6-шар пин тенкĕлĕх, Яранский тата Никифоров юлташсем 5-шер пин тенкĕлĕх, Тимофеев тата Васильева юлташсем 4-шар пин тенкĕлĕх туяннă

Республикăра пĕтĕмпе 25 миллион тенкĕлĕх сарнă

Укçапа япаласен виççĕмĕш лотерейин билечĕсене сарас ĕç республикăра ăнăçлăн пулса пырать. Октябрĕн 26-мĕшĕ вĕçленнĕ тĕле республикăра пĕтĕмпе 25 миллион та 575 пин тенкĕлĕх сарнă, вăл шутран 15 миллион та 879 пин тенкине çийĕнчех перекет кассисене хывнă. Лотерея билечĕсене рабочисемпе служащисем хушшинче 4.101.000 тенкĕлĕх, колхозниксем хушшинче 21.474.000 тенкĕлĕх сарнă.

Малти вырăнта Шупашкар хули, Сĕнтĕрвăрри, Шупашкар, Вăрмар, Çĕрпӳ, Комсомольски, Октябрьски районсем пыраççĕ. Сĕнтĕрвăррипе Вăрмар районĕсем лотерея билечĕн укçине те 90 процент ытла пухнă. Тăвай тата Кувакино районĕсенче лотерея билечĕсене сарас ĕç чылаях юлса пырать. Шăмăршăпа Вăрнар районĕсенче лотерея укçине пухасси çителĕксĕр пулса пырать, вĕсем лотерея билечĕн укçине 30 процент ытларах çеç пухнă.

Партипе совет тата профсоюз организацисен паянхи задачи — лотерея билечĕсене сарнипе пĕрлех унăн укçа пухас ĕçе вăйлатасси пулса тăрать.

Çулăмлă патриотсем

ЭЛĔК, октябрĕн 26-мĕшĕ. (**Телефонпа**). Районри пур колхозсенче те лотерея билечĕсене сарасси вăйлансах пырать. Нумай колхозсем малтанхи кунах темиçе пиншер тенкĕлĕх сарнă. Тенири «1-ое Мая» тата Ехремкассинчи колхозсем малтанхи кунах 15.000-шер тенкĕ укçа хывнă.

Шарипкăри Ворошилов ячĕпе тăракан колхоз членĕсем пĕр кун хушшинче лотерея билечĕсене 18.000 тенкĕлĕх сарнă, укçине çийĕнчех хывнă. Ку колхоз председателĕ Флегентов юлташ лотерея билечĕсене 6.000 тенкĕлĕх туянчĕ. Колхозри бригадирсем Вавилов, Волков, Васильев, Ермолаев юлташсем кашниех 3.000-шер тенкĕлĕх туяннă.

Хирлепри Буденный ячĕпе тăракан колхоз председателĕ Я. Алексеев 6.000 тенкĕлĕх, колхоз счетоводĕ Пушкарев 3.000 тенкĕлĕх, çавăн пекех Ильянкăри колхоз председателĕ Васильева юлташ 4.000 тенкĕлĕх туяннă. Ку колхозра кашни колхозник лотерея билечĕсене 300 тенкĕрен кая мар илнĕ.

Х. ЛИСИН.

Кашни колхозник лотерея билетне 1000 тенкĕрен кая мар туяннă

КУКЕÇ, октябрĕн 26-мĕшĕ. (**Телефонпа**). Колхозниксемпе колхозницăсем лотерея билечĕсене илме тулли кăмăлпа çырăнаççĕ. Пĕр кун хушшинче районра лотерея билечĕсене 1.204.000 тенкĕлĕх сарнă. Лотерея билечĕсен укçине 1.021.600 тенкĕ пухнă.

Лотерея билечĕсене сарасси Шĕнерпуç, Соляновка, Кукеç, Çĕньял Уйкас ялсовечĕсенчи колхозсенче ăнăçлăн иртнĕ. Вĕсем лотерея укçине те çийĕнчех тӳленĕ.

Самуккассинчи Ворошилов ячĕпе тăракан колхозра лотерея билечĕсене хăвăрт сарнă. Унта лотерея билечĕсем илме 25.000 тенкĕлĕх çырăннă, укçине пĕтĕмпех тӳлесе татнă. Колхозра лотерея билетне 1000 тенкĕрен кая туяннă колхозниксем пачах та çук.

Лотерея билечĕсене сарасси паян та ăнăçлăн пырать. Кăнтăр çитиччен Чкалов ячĕпе тăракан колхозра 10.000 тенкĕлĕх, «Строитель» колхозра 26.100 тенкĕлĕх, «Память Ленина» колхозра 20.000 тенкĕлĕх сарнă. Укçине перекет кассине хывнă.

Нумай колхозниксем лотерея билечĕсене темиçе пиншер тенкĕлĕх туянаççĕ. «Стрела» колхоз председателĕ П. Тимофеев юлташ 4.000 тенкĕлĕх, «Красный флот» колхоз председателĕ А. Васин 3.000 тенкĕлĕх, Молотов ячĕпе тăракан колхоз председателĕ И. Гаврилов юлташ 2.000 тенкĕлĕх туяннă.

П. СТЕПАНОВ.
Перекет кассин заведующийĕ.

Хĕрлĕ Çара пулăшасси—пирĕн тивĕçлĕх

ÇĔРПӲ, октябрĕн 26-мĕшĕ. (**Телефонпа, хамăр корр**). Çĕньялти Чапаев ячĕпе тăракан колхозра ĕнер укçапа япаласен виççĕмĕш лотерейин билечĕсене сарасси пуçланнă ятпа колхозниксемпе колхозницăсен митингĕ пулса иртрĕ. Митингра тухса калакан колхозниксем хăйсем Хĕрлĕ Çара пулăшма яланах хатĕр пулни çинчен каларĕç. Нумай колхозниксем лотерея билечĕсене çырăнса, укçине те çавăнтах тӳлерĕç.

Отечественнăй аслă вăрçă участникĕ Е. Григорьев юлташ лотерея билечĕсене 2.000 тенкĕлĕх туянчĕ, укçине те çавăнтах тӳлерĕ. Колхозница А. Абрикова юлташ (унăн упăшки фронтра) 400 тенкĕлĕх, А. Иванова 500 тенкĕлĕх, 70 çулхи колхозник Г. Егоров юлташ (унăн икĕ ывăлĕ фронтра) 300 тенкĕлĕх çырăнса укçине çийĕнчех тӳлерĕç. Лотерея билечĕсене колхозниксем пысăк хаваслăхпа çырăнаççĕ.

Лотерея билечĕсемшĕн пухнă укçана перекет кассине хывнă.

Малта пыракан районсемпе танлашар

ХЕРЛЕ ЧУТАЙ, октябрĕн 26-мĕшĕ. (**Телефонпа**). Ĕнер укçапа япаласен виççĕмĕш лотерейин билечĕсене рабочисемпе служащисем хушшинче 38.000 тенкĕлĕх, колхозниксемпе колхозницăсем хушшинче 268.000 тенкĕлĕх сарнă. Ку хисепрен 277.000 тенкĕ укçине перекет кассине хывнă. «Радио», «Совет», «Труженик», «Марксист», «Путь социализма» тата ытти колхозсем лотерея билечĕсен укçине çийĕнчех тӳлесе татрĕç.

Паян кăнтăрлаччен районри перекет кассине лотерея билечĕсен укçине 72.000 тенкĕ хывнă.

Малта пыракан районсемпе танлашас тесен, пирĕн ĕçе татăклăнах вăйлатмалла. Çавăншăн кĕрешетпĕр халĕ эпир.

Н. ВОРОБЬЕВА.
Районри перекет кассин заведующийĕ.

Шупашкарти предприятисемпе учреждениесенче

Хулари предприятисемпе учреждениесенче ĕçлекенсем хушшинче укçапа япаласен виççĕмĕш лотерейин билечĕсене пĕр кун хушшинче 1.073.000 тенкĕлĕх сарнă. Лотерея билечĕсене сарас тĕлĕшпе çыхăну организацийĕсем тата ытти чылай организацисемпе предприятисем пысăк ӳсĕмсем тунă.

Лотерея билечĕсене сарасси ĕнер те ăнăçлăн пулса пычĕ. Макарон фабрикинчи рабочисемпе служащисем пурте лотерея билечĕсем илме çырăннă. Работница Хрусталева юлташ 100 тенкĕлĕх çырăнса 50 тенкине çийĕнчех панă. Смирнова, Матвеева юлташсем те лотерея билечĕсем илме хăйсен уйăхри ĕç укçин 20 процентĕ чухлĕ ытла çырăннă.

Пир-авăр тĕртекен фабрикăри рабочисемпе работницăсем уйăхри ĕç укçин 26 процентĕ чухлĕ çыраннă. Сенаткина юлташ уйăхри ĕç укçинчен ытларах, Михайлова, Стурикова юлташсем уйăхри ĕç укçин 50 процентĕ чухлĕ çырăннă.

«Кооператор» промартельти столярнăй цехра лотерея билечĕсене пĕр сехет хушшинчех сарса пĕтернĕ. Унта ĕçлекенсем пурĕ 2.200 тенкĕлĕх çырăннă. Ку вăл уйăхри ĕç укçи хисепĕн 13 процентĕ чухлĕ шутланать. Чылай рабочисем уйăхри ĕç укçи хисепĕн 30 процентĕ чухлĕ е ытларах çырăннă. Çапла, А. Федисов, Краснов юлташсем уйăхри ĕç укçин 40 процентĕ чухлĕ çырăннă.

«Кожупряжь» артельти нумай рабочисем 300-шер тенкĕлĕх çырăннассĕ.

Совет Информаци Бюровĕнчен

ОКТЯБРĔН 25-МĔШĔНЧИ ОПЕРАТИВНĂЙ СВОДКА

УКРАИНĂРИ 3-мĕш фронтăн çарĕсем, УКРАИНĂРИ 2-мĕш фронтăн çарĕсем флангран татăклă пулăшнипе, октябрĕн 25-мĕшĕнче Украинăри область центрне — ДНЕПРОПЕТРОВСК хулине тата ДНЕПРОДЗЕРЖИНСК хулине тытса илнĕ, çавăн пекех тата халăх пурăнакан ытти 40 пункта ытла йышăнса илнĕ. Вĕсен шутĕнче РОМАНКОВО, СЕМЕНОВКА, НОВОСЕЛОВКА, ИЛЬИНКА, ТРИТУЗНАЯ, ТАРАНСКОЕ, КАРНАУХОВСКОЕ, СУХАЧЕВКА, КРАСНОПОЛЬЕ, ЛОЦ-КАМЕНКА, КАЙДАКИ, АНТОНОВКА, ЗВОНЕЦКИЙ, КАЛИНОВКА, ВОВНИГИ ятлă пысăк ялсем тата ВОСКОБОЙНЯ, БАГЛЕЙ, СУХАЧЕВКА, ВОЙЦЕХОВО ятлă чугун çул станцийĕсем пур.

МЕЛИТОПОЛЬ хулинчен кăнтăр-хĕвеланăçнерехри районра УКРАИНĂРИ 4-мĕш фронтăн çарĕсем, тăшман оборонине çĕмĕрсе кĕнĕ талкăша аслăлатса пырса, НОВО-НИКОЛАЕВКА, ЧЕХОГРАД, ДАРМШТАДТ, ДМИТРОВКА, РОДИОНОВКА ятлă вăйлă тĕреклетнĕ пунктсене тытса илнĕ.

КРИВОЙ РОГ хули енче пирĕн çарсем çаплах наступлени туса пынă, уйрăм участоксенче 5 километртан пуçласа 8 километр таран малалла куçнă, халăх пурăнакан чылай пунктсене тытса илнĕ. Вĕсен шутĕнче СТЕПАНОВКА, НОВО-СВЕТЛОПОЛЬ, ИЗМАЙЛОВКА, ПУСТЕЛЬНИКОВ, ГРУЗЬКА, ИНГУУРЕЦКИЙ, ГЛИЕВАТКА, ДУБОВА БАЛКА, ТЕПЛОВКА, КАЗЫДУБЫ ятлă пысăк ялсем тата КОРОЛЕВКА, АДАМОВСКИЙ ятлă чугун çул станцийĕсем пур.

Фронтăн ытти участокĕсенче вăйлă разведка тунă тата тăшмана хирĕç артиллерипе миномётсенчен персе тăнă.

Октябрĕн 24-мĕшĕнче пирĕн çарсем мĕнпур фронтсенче нимĕçсен 105 танкне персе çĕмĕрнĕ е пĕтерсе тăкнă. Сывлăшри çапăçусенче тата çӳлелле перекен артиллери тăшманăн 49 самолетне персе ӳкернĕ.

☆ ☆ ☆

Пирĕн çарсем паян Украинăри область центрне—Днепропетровск хулине тытса илнĕ. Çавăнпа пĕрлех нимĕçсен Днепр шывĕн сылтăм енчи оборонин тепĕр пысăк тĕввине — Днепродзержинск хулине тытса илнĕ. Тăшман Днепропетровск хулине нумай уйăхсем хушши çирĕплетнĕ. Днепр шывĕн хĕвеланăç енче бетонран тунă темĕн чухлĕ дотпа дзот туса тултарнă. Çын çӳллĕш окопсем алтнă. Днепропетровск хулине нимĕçсен пысăк вăйĕсем хӳтĕлесе тăнă. Çав вăйсен аллинче вăрçăн хăватлă техники пулнă. Пĕр соединени боецĕсем Днепр урлă каçнă та, Днепропетровск хулине кăнтăртан çавăрса илсе пырса, хаярран çапăçнă хыççăн нимĕçсене Сухачевка, 1-мĕш Диевка тата 2-мĕш Диевка ялĕсенчен хĕссе кăларнă. Çав вăхăтрах пирĕн гварди чаçĕсем Днепр шывĕ урлă Днепропетровск хулинчен кăнтăр-хĕвелтухăçнерехри вырăнта каçнă. Вĕсем Кайдаки, Лоц-Каменка ятлă ялсене тытса илнĕ те, кăнтăртан тапăнса пырса, хулана пур енчен те çавăрса илме тапратнă. Нимĕçсем совет çарĕсем вăйлăн пыра-пыра çапнине тӳсме пултарайман, вĕсен оборони арканса кайнă. Паян пирĕн боецсем Днепропетровскпа Днепродзержинск хулисене штурмласа тытса илнĕ. Трофейăсем питĕ нумай тытса илнĕ—тупăсем, пулеметсем, минометсем, чугун çул вагонĕсем, боеприпассен, анат-çимĕç, инженерла пурлăх тата ытти çар пурлăхĕн склачĕсем те питĕ нумай.

* * *

Мелитополь хулинчен кăнтăр-хĕвеланăçнерехре пирĕн çарсем хаяррăн çапăçнă хыççăн тăшманăн вăйлă тĕреклетнĕ оборонин иккĕмĕш тăрăхне, Мелитопольпе Крым хушшинчи чугун çул çумĕпе туса кайнăскерне, татса кĕнĕ. Нимĕçсем хирĕç тăнине çĕмĕрсе тăкса, совет çарĕсем Чехоград, Драмштадт, Дмитровка тата ытти тĕреклетнĕ пунктсене те тытса илнĕ. Çав пунктсемшĕн пынă çапăçусенче тăшмана питĕ пысăк çухатусем кӳнĕ. Туллимар даннăйсем тăрăх, нимĕçсен 2.000 салтакĕпе офицерне ытла пĕтерсе тăкнă. Тăшманăн 53 танкне, хăй тĕллĕн çӳрекен 8 туппине, 46 хир туппине, 43 миномет, 142 пулемет, 120 автомашина тата боеприпассен 2 складне çĕмĕрсе е пĕтерсе тăкнă. 160 гитлеровеца тыткăна илнĕ. Пирĕн çарсем трофейăсем нумай тытса илнĕ. Вĕсен шутĕнче хĕçпăшалпа боеприпассем тиенĕ 62 вагон, 25 тупă, винтовкăсемпе автоматсем нумай.

Пирĕн летчиксем сывлăшри çапăçусенче нимĕçсен 11 самолетне персе ӳкернĕ. Унсăр пуçне тата тăшманăн аэродромĕ çинче нимĕçсен 7 самолетне пĕтерсе тăкнă.

* * *

Кривой Рог хули енче пирĕн çарсем çаплах наступлени туса пынă. Тăшман кунта татти-сыпписĕр çĕнĕ вăйсем илсе пырать, совет чаçĕсем малалла куçнине чарса лартма хăтланать. Пĕр участокра нимĕçсем 8 контратака тунă, анчах та пирĕн чаçсем вĕсене йывăр çухатусем кӳнĕ, вара нимĕçсем пирĕн çарсем пыра-пыра çапнипе нимĕн тĕлли-пăлли сĕр каялла чакнă. Çапăçу хирĕнче çунса кайнă 22 танк тата тăшманăн салтакĕсемпе офицерĕсен темиçе çĕр вилли выртса юлнă. Тепĕр участокра совет танкисчĕсем нимĕçсен мотопехота полкне аркатса тăкнă та халăх пурăнакан темиçе пункта тытса илнĕ. Трофейăсем тытса илнĕ. Тыткăна илнисем пур.

* * *

Балтика тинĕсĕнче флот самолечĕсем тăшманăн 6.000 тонна таякан судне шыва путарнă.

* * *

Каменец-Подольск облаçĕнче кĕрешекен украинец партизанĕсен отрячĕ çак эрнесенче нимĕçсен 4 çар эшелонне ӳпĕнтерсе янă. 3 паровоз, 24 вагонпа платформа çĕмĕрĕлнĕ. Çав крушенисенче 200 гитлеровец ытла вилнĕ. Партизансем чылай вырăнсенче чугун çула сирпĕнтерсе янă. Çав участокра вăрах темиçе талăк хушши поездсем çӳремен. Ровно облаçĕнче кĕрешекен партизансен отрячĕсем икĕ кун хушшинче тăшманăн чугун çулпа пыракан 7 эшелонне ӳпĕнтерсе янă.

* * *

Нимĕçсен 181-мĕш дивизийĕнчи 334-мĕш полкăн 2-мĕш ротинчен тыткăна лекнĕ салтак Антон Хойдер çапла каласа панă: «Манăн çар службине çак çулхи çуркунне илчĕç. Çар ĕçне эпĕ Германире вĕрентĕм. Июль уйăхĕн юлашки кунĕсенче мана Норвегие Осло хулине ячĕç. Кунта мана 334-мĕш полкри 2-мĕш ротăна илчĕç. Сентябрĕн 22-мĕшĕнче пирĕн полка пароход çине лартрĕç те Дание илсе кайрĕç. Данирен эпир Штеттин—Варшава—Брест-Литовск—Минск урлă килтĕмĕр те октябрĕн 6-мĕшĕнче Орша хулине антăмăр. Пирĕн поездра мĕн пурĕ 80 вагончĕ. Кашни вагонра 40-шер çын пулнă. 15 кун хушшинче вырăс артиллерисчĕсем пирĕн полка питĕ йывăр çухатусем кӳчĕç. Эпĕ тыткăна лексе хам пурнăçа çăлса хăварнăшăн хама хам телейлĕ тесе шутлатăп».

* * *

Орел облаçĕнчи Сукремль ялĕнчи çынсем çапла каласа кăтартнă: «Нимĕç ирсĕрĕсем вырăнти халăхран темĕн тĕрлĕ те мăшкăлласа кулнă, мирлĕ çынсене вĕлернĕ, çемьи-çемьипе пĕтерсе тăкнă. Фашистла бандитсем Кормилицынпа унăн икĕ ывăлне, Тимохинпа унăн виçĕ ывăлне тата ытти колхозниксене те нумайĕшне çакса вĕлерчĕç. Пĕр кун хушшинче кăна 1943-мĕш çулхи июлĕн 10-мĕшĕнче нимĕçсем ним айăпсăр 115 мирлĕ çынна персе пăрахрĕç. Гитлерла çынçиенсем хăйсем тытса хупнă совет гражданĕсене мĕнле асаплантарнине пăхса тăма вырăнти халăха вăйпа хăвала-хăвала пынă. Гитлерла пуçкасакансем площадьре вырăнти халăх умĕнче Чикина, Кондратьева тата Богнарева хĕрарăмсене асаплантарнă. Малтан вĕсем çав хĕрарăмсен умĕнчех вĕсен ачисене персе пăрахнă, кайран вара хăйсене те çакса вĕлернĕ. Чĕррĕн тăрса юлнă ял çыннисем фашистла юн ĕçекенсене ылханса асăнаççĕ».

Пирĕн авиаци Знаменка чугун çул тĕввине тата Никополь станцине тапăнни

Октябрĕн 25-мĕшĕ ыран тенĕ чух çĕрле пирĕн авиаци каллех тăшманăн Знаменка чугун çул тĕввинче тата Никополь станцинче капланса тăнă çар эшелонĕсем çине бомбăсем пăрахнă. Чугун çул çинчи çар хатĕрĕсем тиенĕ вагонсемпе платформăсем хушшинче пушарсем тухнă, пушарсенче взрывсем пулнă.

Пирĕн самолетсем пурте хăйсен аэродромĕсене таврăннă.

Ялхуçалăх ĕçĕсене туса пĕтертĕмĕр

Тăван çĕршыв фронт умĕнчи тивĕçе ăнланса, пирĕн Кăпас ялсоветĕнчи «КИМ» колхоз членĕсем кăçалхи уборкăра вăй шеллемесĕр ĕçлерĕç. Çавăнпа пула пирĕн хирти тырра кĕске срокра, пĕр тăкаламасăр пуçтарса кĕртрĕмĕр, государство умĕнчи обязательствăсене срокчен парса татрăмăр. Октябрĕн 1-мĕшĕ тĕлне вара ялхуçалăх ĕçĕсене пĕтĕмпех туса пĕтертĕмĕр.

Пирĕн колхозра ĕçлеме пултаракансем мĕн пурĕ 120 çын. Çавăн чухлĕ ĕç вăйĕпе пирĕн кăçал 281 гектар тырра пуçтарса кĕртмелле пулнă. Ĕç нормисем тăрăх шутласан, вăл пирĕн колхозниксене 25 кун хушши ĕçлеме çитмеллечĕ, анчах эпир ăна 15 кун хушшинчех вырса пуçтартăмăр. Колхозниксем кашнинех уйрăм участоксем уйăрса илсе ĕçлерĕç. Кашниех хăйсен заданийĕсене ирттерсе тултарасшăн кунĕн-çĕрĕн ырми-канми кĕрешрĕç. Чылай колхозниксем куллен икшер норма ытла тултарса пычĕç. Уйрăм колхозниксем уборка вăхăтĕнче кăна çĕршер ĕçкунĕ ытла турĕç. Сăмахран, А. Савельева юлташ илашки 4 уйăх хушшинче 248 ĕçкунĕ, Громова Елена—175 ĕçкунĕ, Орлова Александра—200 ĕçкунне яхăн, Аргандеева Юлия—165 ĕçкунĕ турĕ.

СССР Совнаркомĕпе ВКП(б) Центральнăй Комитечĕ кăçалхи уборкăна ирттересси çинчен йышăннă постановление пурнăçласа, эпир тыра вырма тухсан 4—5-мĕш кунĕнчех авăн çапма тытăнтăмăр. Государствăна тыра лессе тăма 8 лавран транспорт бригади турăмăр. Çак бригадăна государствăна хăçан тыра парса татмаллине кăтартса патăмăр. Вăл бригадăри çыннсене ытти ĕçе ямăн. Çавна пула вĕсем хăйсен заданине срокчен пурнăçларĕç.

Колхоз сентябрĕн 20-мĕшĕ тĕлне государствăна тыра парса татрĕ. Çав вăхăт тĕлнех эпир авăн çапса пĕтертĕмĕр. Çапла вара, ялхуçалăхĕнчи ну отвотлă та пысăк ĕçсене фронтовой уйăхлăх пуçланиччен вĕçлерĕмĕр. Фронтовой уйăхлăх пуçланиччен хыççăн государствăна тыра 1944-мĕш çулшăн пама тытăнтăмăр.

Çитес çулшăн аванс шучĕпе 100 центнер ытла тыра патăмăр. Ялхуçалăхĕнчи ытти ĕçсемпе пĕрлех кĕрхи çĕртмене те вăхăтра турăмăр. Кĕрхи çĕртме тума эпир тыра акса пĕтерсенех тытăнтăмăр. Ку тĕлĕшпе кашни бригадăрансах икшер çын—пĕтĕмпе 8 çын—ĕçлерĕç. План тăрăх кĕрхи çĕртмене 120 гектар тумалла пулнă пулсан, эпир 160 гектар туса хăвартăмăр.

Эпир çитес çураки валли вăрлăхсене сортласа кондициллĕ туса хутăмăр. Колхоз кăçал вылăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕçре те чылай çитĕнсе турĕ. Общественнăй вылăх-чĕрлĕх ĕрчетмелли плана пур вылăхсем енĕпе те ирттерсе тултарнă. Государствăна кăçалхи çулшăн та, çитес çулшăн та аш-какай тахçанах парса татнă, 1945-мĕш çулшăн 9 центнер панă. Кунсăр пуçне, нимĕç оккупанчĕсенчен ирĕке кăларнă районсем валли 6 ĕне сутнă.

Вылăхсене хĕл каçарма хатĕрленес тĕлĕшпе те чылай ĕçсем туса ирттертĕмĕр. Вылăх витисем çĕнĕрен тавас тата киввисене юсас тĕлĕшпе колхозра уйрăм бригада ĕçлерĕ. Ку бригада кăçал 100 пуç вырнаçмалăх çĕнĕ вите туса лартрĕ. Кивĕ витесене те юсаса, ăшă тытмалла туса çитерчĕ. Вылăх-чĕрлĕхсене хĕл каçармалăх апат-çимĕç хатĕрлесе хунă. Колхоз кăçал планран ирттерсе 50 тонна силос хывса хăварчĕ.

Пирĕн колхозниксен ĕçри хастарлăхĕ пысăк. Эпир Хĕрлĕ Çар фондне пурпа маллалла кайса пынине хавхаланса çĕклентĕмĕр. Фронта пур майсемпе те пулăшса пыма тăрăшатпăр. Акă, хĕрсе çĕрулми кăларнă вăхăтра колхозниксем, каçсерен сывăрмасăр çăм арласа, паттăр Хĕрлĕ Çар боецĕсем валли 100 мăшăр ăшă носки сиппесе алсиссем çыхса пачĕç тата 25 пир, 23 алшăлли панă.

Умра тата пысăк ĕçсем тăраççĕ. Октябрь уявĕ тĕлне колхоз çитес çуракине хатĕрлене çитме тăрăшать. Çак задачăна пурнăçлама пирĕн пур условисем те çителĕклĕ, эпир ăна пурнăçлатпăрах.

Н. СКВОРЦОВ,
Сĕнтĕр районĕнчи «КИМ» колхоз председателĕ.

Аслă уява хирти ĕçсене вĕçлесе кĕтсе илетпĕр

ЕТĔРНЕ. Пирĕн «Красная звезда» колхоз ытти çулсенче те ялхуçалăх ĕçĕсене вăхăтра туса пынă. Анчах кăçалхи пек ырми-канми тата хаваслăн ĕçлени халиччен пулманччĕ. Ĕçсем кăçал питĕ те хĕрӳллĕн пулса пычĕç, кашни колхозник вăй шеллемесĕр ĕçлерĕ. Нимĕнле йывăрлăхсем умĕнче те чарăнса тăмарăмăр, ялхуçалăх ĕçĕсене ăнăçлăн туса пĕтертĕмĕр.

Паянхи куна эпир 1943-мĕш çулхи çураки ĕçĕсене пĕтĕмпех вĕçлерĕмĕр. Вăхăтра тирпейлĕн пухса кĕртнĕ тырпулсене октябрĕн 8-мĕшĕнче çапса пĕтертĕмĕр. Государство умĕнчи обязательствăсене срокчен парса татрăмăр.

Кĕрхи çĕртме тăвасси çак иртнĕ кунсенче малти вырăнта пулчĕ. Кĕрхи çĕртме тырпулăн тухăçлăхне ӳстерме кирлине ăнланса, çĕре эпир тарăн та кăпăш сухаласа хăвартăмăр.

Октябрьти социализмлă аслă революцин XXVI çул тултарнă уяв çывхарса килет. Аслă уява пирĕн колхоз кăçал пĕтĕм ĕçсене ăнăçлăн вĕçлесе кĕтсе илет. Хирти ĕçсене вĕçлесен, пирĕн колхозра ытти ĕçсем енчен çине эпир вĕçлерĕ. Уявчен пĕтĕм машинăсене, çĕрке хатĕрсене пуçтарса кĕртсе хуратпăр. Вĕсем ĕçе хăрăлкине тĕрĕслетпĕр, тăсатса çĕрсе лартатпăр, çĕмĕрĕлнисене юсама тытăнатпăр.

Хĕле тĕплĕн хатĕрленетпĕр. Вылăх-чĕрлĕх витисене эпир юсаса çитерни. Правлени валли, арман пурĕ валли тата шкул валли вутă ирттарса хатĕрлетпĕр. Килес çул акма вăрлăх сортлама тытăнтăмăр, ăна хĕл каçарма уйрăм амбарсене уйăрса хуратпăр.

Н. ЯКОВЛЕВ,
«Красная звезда» колхоз председателĕ.

Стихван Шавлы

Тăван çĕршыв
(ЮРĂ)

Парăнман Россия çĕрĕ,
Хĕç витмен ун паттăрне,
Ĕмĕр сывă, ĕмĕр чĕрĕ,
Вăл хĕрнĕ хăй ятне.

Эсĕ аслă та мухтавлă,
Эсĕ чаплă та пуян,
Эсĕ вăйлă та хăватлă,
Эсĕ Улăп пек тăран.
Çут Октябрь çуламĕпе,
Вĕлкĕштерчĕ ялавне,
Пĕрлештерчĕ, тăванлатрĕ
Çĕршыври халăхсене.
Эсĕ ирĕклĕн сывлатăн,
Эс — пĕр чăмăр, эс — пĕр
Эсĕ çиреплĕн утатăн,
Эсĕ — çамрăк, эсĕ — вут.

Пĕтĕм çĕр хускалчĕ харăс,
Вăта Кремль йыхăрсан;
Сталин паттăрĕсем карĕç
Нимĕçе хăваласа.

Эсĕ тăвăл евĕр çапрăн,
Эсĕ кĕтĕн вут ăнне,
Тăшман урчĕ, тăшман чакрĕ,
Кĕл çес пулĕ хăвăрне.
Мирлĕ кун килет хавасăн
Юрăпа кĕтсе илер,
Усăрнах юрлар пĕр саслăн:
Сывă тăтăр тăван çĕр!
Эсĕ аслă та мухтавлă
Эсĕ чаплă та пуян,
Эсĕ вăйлă та хăватлă,
Эсĕ Улăп пек тăран.

Завод мĕншĕн начар ĕçлет

СЕНТĔР. Юнкăри çу заводĕ кăçалхи июль уйăхĕччен плана ăнăçлăн тултарса пынă. Виççĕмĕш кварталта вара завод çу тумалли плана 74 процент çеç тултарнă.

Мĕншĕн-ха завод начар ĕçлет? Март уйăхĕнче завод директорĕ пулса Кулаков ĕçлеме тытăннă. Малтанах вăл ĕçшĕн тăрăшнă, анчах юлашки вăхăтра вара ĕçе ертсе пыма пăрахнă, ответлăха çухатнă.

Заводăн çурчĕсене юсамалла пулнă. Кулаков ун çине çаврăнса та пăхман. Сĕт-çу тытмалли савăт-сапа çитмест. Çавăн пирки çуллахи вăхăтра çăва цехрах тытнă. Тăпăрча колхозниксен лареĕсенче тытаççĕ. Унта тăпăрчă çухалма та, пăсăлма та пултарать.

Заводра тасалăхшăн кĕрешмеççĕ. Кил хушшинче—çӳп-çап, цехсенче—шăнасем, эрешмен картисем. Рабочисем валли халатсем çитмеççĕ. Пуррисем те хура.

Заводăн пĕр автомашина, тепĕр лаша пур. Автомашини йĕркеллĕ ĕçлемест. Çу каçиччен 5 хут кăна Канаша кайса килнĕ. Халĕ вара шофер çук пирки ларать. Çав вăхăтрах цехсенче 8—9 тонна таран çу выртать. Райсовет исполкомĕ çу турттарма колхозсенчен лавсем уйăрса панă. Анчах завод дирекцийĕ вĕсемпе вăхăтра уса курман.

Заводра хĕрарăмсем ĕçлеççĕ. Вĕсем хушшинче политикăллă-массăллă ĕçе организацилемен. Работницăсем çĕнĕ хыпарсене урамра илтнипе çеç пĕлеççĕ. Комсомол тата профсоюз организацийĕсем нимĕн те тумаççĕ. Профорг О. Шкатулло: «Эпĕ çамрăк, эпĕ хам та пĕлместĕп», тесе ларать.

Хĕл çывхарать, вутă кирлĕ. Анчах вутă питĕ сахал хатĕрленĕ. пĕр лав та турттарман.

Нумай пулмасть завод директорĕ пулма Серова юлташа лартнă. Директора улăштарнипех ĕçсем юсанасси çине шанма çук. Завода лайăх ĕçлекен тăвас тесен, ăна партипе совет организацийĕсем пулăшни кирлĕ.

Т. ИВАНОВ.
(Хамăр корр.).

Агитаторсем валли—паха кĕнеке

Чăвашсен Государство Издательстви çак кунсенче «Советлă Чăваш республики Октябрьти социализмлă аслă революци 26 çул тултарнă тĕле» ятлă кĕнеке пичетлесе кăларчĕ. Ăна ВКП(б) Обкомĕн пропагандăпа агитаци отделĕ Октябрьти социализмлă аслă революци 26 çул тултарнă тĕле каласусемпе докладсем ирттерме агитаторсемпе пропагандистсене пулăшас тĕлĕшпе çырса хатĕрленĕ.

Кĕнекере Социализмлă аслă революцин 26 çулĕ хушшинче тăван çĕршывра тунă çĕнтерӳсене, Октябрьти социализмлă революци чăваш халăхне панă тивĕçлĕхсене, Чăваш республикин 26 çул хушшинчи çитĕнĕвĕсене, чăваш халăхĕ нимĕçсен фашистла захватчикĕсене хирĕç туса пыракан Отечественнăй аслă вăрçа мĕнле хутшăннине тата малашнехи задачăсене тĕплĕн çырса кăтартнă. Кĕнекене ăнланмалла та çăмăл чĕлхепе çырнă.

«Советлă Чăваш республики Октябрьти социализмлă аслă революци 26 çул тултарнă тĕле» ятлă кĕнеке агитаторсемпе пропагандистсене каласусемпе докладсем ирттерме пысăк пулăшу парĕ.

Педучилище уяв умĕн

Канашри педагогика училищи ВЛКСМ 25 çул тултарнă куна кĕтсе илме хатĕрленет. Халĕ вĕренекенсем хушшинче час-часах комсомол пурнăçĕ çинчен калакан темăсемпе каласусем ирттереççĕ. Çак кунсенче «Комсомол тата унăн ĕçĕсем», «комсомол Отечественнăй вăрçă кунĕсенче» ятлă докладсем пулса иртрĕç. Комсомол пурнăçĕпе паллашнă хыççăн çамрăксем комсомол ретне кĕме кăмăл турĕç. Организацире халĕ 20 комсомолец, тата 10 çамрăк комсомола кĕме хатĕрленеççĕ.

Вĕренекенсем уява «отлично» паллăсемпе кĕтсе илес тесе социализмлă ăмăртăва хутшăнчĕç. Училищĕри драмкружок (руководителĕ В. Кондратьева) çĕнĕ пьеса лартма, хор кружокĕ тĕрлĕрен юрăсем юрласа пама хатĕрленеççĕ. Октябрĕн 28-мĕшĕнче ВЛКСМ 25 çул тултарнă ятпа чаплă вечер пулать.

И. МАКСИМОВ.

Ют çĕршывсенче

АНКАРАРИ СОВЕТ ПОСОЛЬСТВИНЧЕ «ОНА ЗАЩИЩАЕТ РОДИНУ» ЯТЛĂ ФИЛЬМА ПĂХСА ТУХНĂ

АНКАРА, октябрĕн 25-мĕшĕ. (ТАСС). Анкарара, Совет Союзĕн посольствинче, «Она защищает родину» ятлă совет фильмне пăхса тухнă. Çав фильма пăхнă çĕрте Турцин премьер-министрĕ Сараджоглу, ют çĕршыв ĕçĕсен министрĕ Нуман Менеменджиоглу тата Турци правительствин ытти членĕсем, союзлă туслă çĕршывсен дипломатиллĕ представителĕсем, меджлис депутачĕсем, общество деятелĕсем, писательсем тата журналистсем пулнă. Фильм çынсене питĕ кăмăла кайнă, пăхса ларакансем тăваллăн алă çупнă. Çавăнта пулнă çынсенчен нумайĕшĕ çак фильм совет халăхĕ фашистла варварсемпе паттăрран кĕрешнине тĕрĕс кăтартса панине палăртнă.

ФРАНЦУЗСЕН КАНАШ ПАРАКАН АССАМБЛЕЙИН СЕССИЙĔ УÇĂЛАТЬ

ЛОНДОН, октябрĕн 25-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентстви пĕлтернĕ тăрăх, ноябрĕн 3-мĕшĕнче Алжирта французсен канаш паракан вăхăтлăха тунă ассамблейин пĕрремĕш ларăвĕ пулса иртет. Çак ассамблея вăл Франци парламенчĕн ĕçĕсене туса тăмалла. Унăн задачи—Француз нацине ирĕке кăларас тĕлĕшпе ĕçлекен комитета тĕрлĕ ĕçсем тума сĕнесси çеç пулса тăрать. Унта 84 член, вĕсенчен 20-шĕ—Францин депутатсен палатипе сеначĕн членĕсем (вĕсене хăйсен партийĕсем лартнă, вĕсене 1939 çулта Франци парламентĕнче парти фракцийĕсен йышĕ мĕнле пулнине пăхса уйăрса лартнă), 12-шĕ—правительствăн вырăнти чиновникĕсем (вĕсене французсен Çурçĕр Африкăри вырăнти влаçĕсем лартнă), 40-шĕ—Францире оккупантсене хирĕç тăракан организацисен представителĕсем, 12-шĕ—ытти çĕрсенче (Индо-Китайра тата Францин ытти çĕрĕсенче) оккупантсене хирĕç тăракан организацисен членĕсем.

Алжира Францин депутатсен палатипе сеначĕн 30 членĕ пынă ĕнтĕ. Вĕсенчен нумайĕшĕ Францирен Лондона тарса кайнă, Лондонран вара Алжира кайнă. Лондонра вĕсем «Кĕрешекен Францин парламентри ушкăнĕ» тунă, унта Францири пур партисен представителĕсем те кĕреççĕ. Çав ушкăнăн председателĕ — социалистсен партийĕн членĕ Феликс Гуэн (вăл Риомри процесра Леон Блюма хӳтĕленĕ), председатель заместителĕсенчен пĕри—радикалсен партийĕн пĕр пуçлăхĕ, çĕрĕç министрĕ пулнă Анри Кэй, тепри—коммунистсен депутачĕ Флоримон Бонт, виççĕмĕшĕ—Фланденăн ĕлĕкхи партийĕн членĕ пулнă Луи Жакино. Парламентри çак ушкăн çапла каланă: «Пирĕн задача—Француз нацине ирĕке кăларас тĕлĕшпе ĕçлекен комитета Франције ирĕке кăларас ĕçре пулăшасси пулса тăрать», тенĕ.

ИТАЛИРИ ВĂРÇĂ ĔÇĔСЕМ

ЛОНДОН, октябрĕн 25-мĕшĕ. (ТАСС). Официальнăй йĕркепе çапла пĕлтереççĕ: Америкăн 5-мĕш армийĕн чаçĕсем малалла куçса пыраççĕ.

Англин 8-мĕш армийĕ, тăшмана вăйлăн хĕссе пырса, фронтăн пĕр участокĕнче Триньо шывĕ патне пыма çул уçнă.

Эльба утравĕн районĕнче союзниксен самолечĕсем нимĕçсен пĕр пысăк суднине путарнă.

Çав вăхăтрах союзниксен авиацийĕ тăшманăн Эгей тинĕсĕнчи тата Италири çар объекчĕсемпе войскисене пыра-пыра тапăннă.

СОЮЗНИКСЕН АВИАЦИЙĔН ĔÇĔСЕМ

ЛОНДОН, октябрĕн 25-мĕшĕ. (ТАСС). Официально пĕлтернĕ тăрăх, союзниксен авиацийĕ ĕнер Шербурти (Çурçĕр Франция) доксемпе тăшман суднисене тапăннă.

Авиацин ытти соединенийĕсем Голландири аэродромсене атакăланă тата Францири хăшпĕр çĕрсене штурмласа тапăннă.

Союзниксен Çурçĕр Африкăри йывăр бомбардировщикĕсем Кăнтăр Австрие вĕçсе пырса тапăннă.

АНГЛИ АВИАЦИЙĔ КАССЕЛЕ, ФРАНКФУРТА, ГАГЕНА ТАТА БОХУМА ТАПĂННИН РЕЗУЛЬТАЧĔСЕМ

ЛОНДОН, октябрĕн 25-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентстви çапла пĕлтерет: Англи авиацийĕ сентябрĕн 19-мĕшĕпе октябрĕн 5-мĕшĕ хушшинче Касселе, Франкфурта, Гагена тата Бохума пыра-пыра тапăнса, Германин 100 ытла промышленность предприятине çĕмĕрнĕ е сиенленĕ.

Франкфуртра бомба тӳрĕ лекнипе Майн шывĕ çинчи шлюз тата шыв хĕрринчипе портри нумай çуртсем ишĕлнĕ.

ФРАНЦИРЕ ÇЫНСЕНЕ ÇĔНĔРЕН ЙЫШЛĂН АРЕСТЛЕÇÇĔ

ЛОНДОН, октябрĕн 25-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентстви çапла пĕлтерет: Виши полицийĕ пĕтĕм Францире «тăшманла çынсене» (урăхла каласан—француз патриочĕсене) хирĕç çĕнĕ кампани пуçласа янă. Францири пур районсенче те полицейскисем халăхсене йышлăн çавăра-çавăра илсе, ухтара-ухтара тухнă. 400 çынна ытла тытса хупнă ĕнтĕ.

Вишири радио пĕлтернĕ тăрăх, тытса хупнисем хушшинче саботажла тата сăтăрла ĕçсен темиçе организаторĕ пур. Дижонра хĕçпăшалсен вăрттăн склачĕсене тупнă.

Германире ĕç вăйĕ питĕ нумай çитмест

НЬЮ-ЙОРК, октябрĕн 23-мĕшĕ. (ТАСС). Юнайтед пресс агентстви пĕлтернĕ тăрăх, Германи промышленноçĕнче ĕç вăйĕ ытларах та ытларах çитмест.

Оккупациленĕ çĕршывсенчи квалификациллĕ рабочисене те çара илнине пула, сывлăшран килсе тапăнассинчен сыхлакан чаçсене 14 çулхи ачасемпе 55—59 çулхи ватă çынсене те илеççĕ.

Германире ĕç вăйĕ çитменни пуринчен ытла куллен кирлĕ таварсем туса кăларакан промышленноçра сисĕнет. Тĕрĕссипе, ку таварсене туса кăларма пăрахнă. Çакна пула ĕнтĕ фашистсем халăхран урана тăхăнмалли кивĕ япаласем, кивĕ тумтирсем пуçтараççĕ. Гитлеровецсен ушкăнĕсем, килĕрен киле çӳресе, хваттерсене ухтараççĕ, халăхран тăхăнмалли япаласем тытса илеççĕ.

Çĕнĕ çĕнтерӳсем патне—малалла!

Л. МИХАЙЛОВ
ВЛКСМ Чăваш Обкомĕн пропаганда енĕпе ĕçлекен секретарĕ

Комсомол 25 çул тултарнине совет çамрăкĕсем отечественнăй аслă вăрçă вăхăтĕнче, Хĕрлĕ Çар гитлерла вăрă-хурахсене хирĕç ăнăçлăн наступлени туса пынă кунсенче кĕтсе илеççĕ.

Вăрçăн малтанхи кунĕсенчен пуçласах пирĕн çĕршыври темиçе миллион комсомолец, тылри çамрăк патриотсем фронт валли хĕçпăшал туса кăларас тĕлĕшпе икĕ хут ытларах вăй хурса ĕçлеме тытăнчĕç. 1941 çулхи июль уйăхĕн пирвайхи кунĕсенчех, Горький хулинчи комсомолецсен пуçарăвĕпе, пирĕн республикăра та икшер норма тултаракансен —двухсотниксен паха юхăмĕ сарăлчĕ. Халĕ пирĕн республикăри предприятисенче çамрăк двухсотниксем çĕршерĕн шутланаççĕ.

Вăрçăн малтанхи кунĕсенчех комсомолецсем фронтовой бригадăсем организацилес ĕçе пуçарчĕç. Çав бригадăсем производствăллă заданисене чăннипех те пархатарлăн пурнăçа кĕртсе пыраççĕ. Хальхи вăхăтра пирĕн республикăра комсомолецсемпе çамрăксен 108 фронтовой бригади ĕçлет.

Республикăри кашни комсомолецпа союзра тăман çамрăк тăшмана çĕнтерес ĕçе активлăн хутшăнма, уява ĕçре çĕнĕ çĕнтерӳсем тунипе палла тума тăрăшать. Комсомол 25 çул тултарнă уява хатĕрленнĕ май, вĕсем хăйсем çине пысăк обязательствăсем илчĕç. Çав обязательствăсене темиçе çĕр çамрăк пурнăçа кĕртрĕç те ĕнтĕ.

Пилĕк уйăх каярах, Сталин юлташăн кăçалхи майăн 1-мĕшĕнчи приказĕ çине ответлесе, Çĕмĕрле комбинатĕнчи комсомолецсем фронтовой бригадăсен социализмлă ăмăртуне пуçарса ячĕç. ВЛКСМ комитечĕн секретарĕ пулса Соловьева юлташ ĕçлекен заводри комсомолецсемпе çамрăксем çав ăмăртура хисеплĕ вырăн йышăнчĕç. Вĕсем тăван çĕршыв валли планран ирттерсе пĕр миллион тенкĕлĕх ытла продукци туса кăларма пулчĕç.

Çамрăксен пуçарăвне заводри ватă рабочисем те кăмăлласах йышăнса илнĕ. Ахальтен мар ĕнтĕ комсомолецсем илнĕ обязательствăсене ватă рабочисем Бадаев, Андреева, Голубчикова тата ытти рабочисем те алă пуснă.

Хуласенчи тата ялсенчи çамрăксем харпăр-хăй предприятийĕн е колхозĕн ĕçĕсене срокчен пурнăçа кĕртме пулса, стахановла вахăтсене тăчĕç. Çапла, республикăри предприятисенче комсомол 25 çул тултарнă ятпа 4.500 çамрăк рабочи стахановла вахтăна тăнă.

Канашри вагонсем юсакан заводра 370 комсомолец тата союзра тăман 800 çамрăк вахтăна тăнă. Вĕсенчен чылайĕшĕ куллен ик-виçшер норма тултарса пыраççĕ.

Комсомолецсемпе çамрăксен Демьянков юлташ ертсе пыракан фронтовой бригади ăмăртăвăн малтанхи кунĕсенчех задание 400 процент тултарчĕ. Комсомолкăсем Хлыстова, Мухина юлташсем сменăра виçшер норма тултарчĕç. Ăмăрту кунран кун хĕрӳленсех пырать. Литейнăй цехри комсомолец Кривцов кунне планпа 80 деталь хатĕрлес вырăнне 450 деталь хатĕрлет. Стахановка Чалкина ĕç нормине 410 процент, Власюк —350 процент, Гусарова 200 процент тултараççĕ. Çамрăк стахановецсен станокĕсем çинче Хĕрлĕ ялавсем илемлĕн ялкăшса тăраççĕ.

Улатăрти паровозсем юсакан заводра та вахтăна 480 çамрăк тăнă. Токарно-механически цехри комсомолецсем ĕç нормине кулленех 137 процент, инструментальнăй цехри комсомолецсем 170—180 процент тултараççĕ. Заводри чылай комсомолецсем — Иван Обрывченко, Зоя Егостина производствăллă задание 200—225 процент тултарса пыраççĕ. Куславкка комбинатĕнчи комсомолецсемпе çамрăксен Давыдов юлташ ертсе пыракан бригади уйăхран уйăхах производство заданине ирттерсе пурнăçлать. Çĕмĕрле комбинатĕнчи фрезеровщик Лузин тăватă çыншăн ĕçлет, токарь Борисов нормăна 514 процент тултарать.

Ăмăртура малта пыракансемпе комсомолăн республикăри ытти организацийĕсем те танлашма тăрăшаççĕ. Шупашкарти табак фабрикинчи çамрăксем, сăмахран, ăмăртăва пуçарса пыраççĕ. Вĕсен фабрики сентябрь уйăхĕнче Пĕтĕм Союзри социализмлă ăмăртура иккĕмĕш вырăн йышăннă. Вĕсем халĕ октябрь уйăхĕнчи ăмăртура пĕрремĕш вырăна тухассишĕн кĕрешеççĕ.

Колхозсемпе совхозсенчи, торф предприятийĕсемпе вăрман хатĕрлекен организацисенчи комсомолецсемпе çамрăксем те хула çамрăкĕсенчен юласшăн мар. Ял çамрăкĕсем ялхуçалăх ĕçĕсене хăвăртрах туса пĕтерессишĕн çине тăрса кĕрешеççĕ. Вĕсем авăн çапас, патшалăха тыра парас тĕлĕшпе ĕçлекен бригадăсем турĕç. Республикăра патшалăха тыра турттарас тĕлĕшпе комсомолецсемпе çамрăксен 897 транспорт бригади ĕçлет, вĕсем 57.345 тонна тыра тата ялхуçалăхĕн ытти çимĕçĕсене хатĕрлев пункчĕсене турттарса пачĕç. Етĕрне районĕнчи «Парижская Коммуна», Советски районри «Пробуждение», Елчĕк районĕнчи «Марс» колхозсенчи комсомолецсемпе çамрăксем чăн-чăн организаторсем пулса тăчĕç. Вĕсем хăйсен колхозĕсене районри малти вырăна кăларчĕç.

Мелитопольтен хĕвеланăçнерехре артиллери шавĕ кĕрлет. Днепр юханшывĕн сылтăм енче хаяр çапăçусем пыраççĕ. Пирĕн республикăри çамрăксем Хĕрлĕ Çарăн фронтри чаплă çĕнтерĕвĕсене питех те савăнса сăнаса пыраççĕ. Вĕсем, наступлени тăвакан Хĕрлĕ Çара вăйлăнрах пулăшса тăрас тесе, фронтовиксем валли ăшă носкисемпе перчаткăсем çыхаççĕ, фронта парнесем хатĕрлесе ăсатаççĕ, фронт заказĕсене срокчен пурнăça кĕртеççĕ.

Комсомолăн 25 çулхи юбилейне хатĕрленнĕ май, пур çĕрте те ĕçре çĕкленӳ пурри курăнать. Анчах тунă çитĕнӳсемпе лăпланса ларни, çитменлĕхсене асăрхамасăр пурăнни пачах пулмалла мар. Вăрçă кунĕсенче çамрăксене политика тĕлĕшĕнчен вĕрентсе çитĕнтерес тĕлĕшпе эпир хăшпĕр ĕçсене турăмăр, апла пулин те пирĕн ку тĕлĕшпе малашне татах ытларах ĕçлемелле-ха.

Вăрçă кунĕсенче комсомол ĕçĕнче пысăк улшăнусем пулчĕç. Организацири комсомолецсен составĕ тата вĕсене ертсе пыракан кадрсем улшăна-улшăна тăчĕç. Нумай организацисене çĕнĕ çынсем, опыт çитĕлĕксĕртерех çамрăксем ертсе пыма тытăнчĕç. Çакă вăл пире актива вĕрентсе çитĕнтерес тĕлĕшпе пĕр чарăнмасăр ĕçлеме кирлине, пуçламĕш организацисен ĕçне лайăхлатассишĕн çине тăрса ĕçлеме кирлине кăтартса парать.

Комсомолецсемпе çамрăксене политика тĕлĕшĕнчен вĕрентсе ӳстерсе пырасси çине уйрăмах тимлĕн çаврăнса пăхмалла. Ку ĕçĕн тĕп никĕсне Сталин юлташăн «Совет Союзĕн Отечественнăй аслă вăрçи çинчен» çырнă кĕнекине хумалла.

Çамрăксене политикăллă воспитани парса, пирĕн вĕсене тăшмана хирĕç кĕрешме яланах хатĕр тăма, тăван халăхăн чысĕшĕн тăма, тăван çĕршыва юратма тата тăшмана курайми пулма вĕрентмелле. Пирĕн çамрăк ăрăва вăрçăн йывăр çулне çĕнтерӳллĕн утса тухма хатĕрлемелле, çар ĕçне тĕплĕн вĕрентмелле. Çамрăксен пурнăçпа йăла условийĕсене лайăхлатассишĕн те пирĕн пĕтĕм вăя хурса ĕçлемелле.

Хĕрлĕ Çар фронтра чаплă çĕнтерӳсем тăвать. Анчах умра çапăçăвăн хаяр та йывăр кунĕсем. Республикăри комсомолецсемпе çамрăксем, хамăрăн мĕнпур вăйсене фронта, паттăр Хĕрлĕ Çара пулăшма мобилизацилер! Мĕнпур вăя çĕнтерӳ тунă çĕре парар!

Пĕлтерӳ

Октябрĕн 27-мĕшĕнче, каçхине 8 сехетре, ВКП(б) горкомĕн парткабинетĕнче (Чувашски ур., 6) Сталин юлташăн «Совет Союзĕн Отечественнăй аслă вăрçи çинчен» ятлă кĕнекине вĕренекен кружоксен тата каласусен руководителĕсен, пропагандистсен семинарĕ пулать. Семинар теми çапла: «Октябрьти социализмлă аслă революци 26 çул тултарни».

Семинара ВКП(б) горкомĕн лекторĕ Давтян юлташ ирттерет.

ВКП(б) горкомĕн парткабинечĕ.

Ответлă редактор В. Я. ЯКОВЛЕВ.

ШУПАШКАРТИ КИНОТЕАТР
октябрĕн 26-мĕшĕнчен пуçласа кашни кун американецсен
МИССИЯ В МОСКВУ
ятлă фильмне кăтартать.
Сеанссем çак вăхăтра пуçланаççĕ:
18. 20 тата 22 сехетре.

Кĕтӳрен ЛАША ÇУХАЛЧĔ. Паллисем çапла: йăр, тĕсĕ — хура, çӳллĕшĕ — вăтамран лутрарах.
Пĕлекенсене çак адреспа пĕлтерме ыйтатпăр: гор. Чебоксары, ул. Ленина, 11, Чебторг, подсобное хозяйство.

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом печати, ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторăн — 0—67, редакци секретарĕн — 4—26, парти пурнăç пайĕн — 3—99, промышленноçпа ялхуçалăх пайĕн—5—31, издательство конторин—0—23.

НТ 1857 Типографи №1, Управления полиграфпромышленности при СНК ЧАССР. Заказ №2 Ф. б 53 84 п. л.